Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ийун 12 вырсарникун № 133 (4946)

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухат

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Суйлав кампанинче большевикла организацилĕх кирлĕ

Ийунĕн 12-мĕшĕнче Грузипе Армени халăхĕсем, ийунĕн 24-мĕшĕнче 26-мĕшĕнче ССР Союзĕнчи ытти халăхсем союзла тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйласси çинчен калаçса, „Правда“ хаçат ийунĕн 10-мĕшĕнчи умсатăрара çапла çырат:

„Рабочисем, хресченсем, Хĕрлĕ Çарпа Флот бойецĕсем, интеллигенци, служащисем, таван çĕршыври мĕн пур ĕçсыннисем çак вăхăтра питех те хавасла, çĕкленÿлĕ, праçник умĕнхи кунсене пурăнса ирттереççĕ. Хуласемпе ялсенчен ытларах та ытларах çав сывхарса килекен суйлавсен йачĕпе тăвакан производствăла çĕнтерÿсем çинчен пĕлтерекен хыпарсем килеççĕ. Верховнăй Советсене депутата суйлама палăртнă кандидатсем хăйсен суйлавçисемпе тĕл пулни калама çук йăшшăн пулса пырат. Суйлавçăсем пур çĕрте те саçăсене коммунисемпе партире тăманнисен Сталинла Союзĕ кандидачĕсемшĕн—халăхăн илемĕне саваççăсемшĕн пама пулни çинчен пĕлтереççĕ“.

Вуншар пин суйлав участкисенче калама çук хĕрÿлĕ ĕç пулса пырат. Довереннăйсемпе вĕсене пулăшаканĕсем—партипе партире мар агитатăрсен пысăк çарĕ халăхсем хушшинче депутатсене суйлама палăртнă кандидатсемшĕн агитациленеççĕ. Суйлавçăсем участксенче спискăсем çине хăйсен хушамачĕсемпе йачĕсене тĕрĕс çырнине тĕрĕслеççĕ. Митингсемпе пухусем, докладсемпе калаçусем, халăхсем хушшинче культурăла тата çутта кăларас ĕç хыттăн пулса пыни—çакăнпа тулса ларнă та çак суйлав умĕнхи кунсем.

Халĕ ĕнтĕ, суйлавсен çитесси питех те сахал йулнă вăхăтра, парти, совет, профсоюз, комсомол организацисен кашниех, округсенче участкăри кашни суйлав комиссийĕн хăйсенчен ыйтас пулат: суйлавсем тĕлне пурне те хатĕрлесе çитернĕ-и? Çак пулас суйлавсене ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн чапла суйлавĕсенчен тата лайăхрах та тата организацилĕн ирттерме парти, Сталин йулташ панă директива большевикла пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пурне те туса çитернĕ-и?

Суйлав комиссийĕсемпе нумай организацисен çак ыйтăва хирĕç кирлĕ пек ответ пама пултараймаççĕ. Чылай вырăнсенче суйлавсене хатĕрленес ĕç чăтма çук начар пырат, хăшпĕр çĕрте ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавне хатĕрленнинчен те йапăхрах хатĕрленеççĕ. Ун çинчен организацилĕ-техникăлă ĕç питех те çителĕксĕр тăни, ĕç хăй тĕллĕн пулассăн шанни тата чылай облаçсемпе республикăсенче çак ĕçре тимсĕрлĕх пулни авăн кăтартса парат.

„Правда“ хаçатра—суйлавçăсен спискисене тирпейсĕр, хăш чухне пачах йĕрĕнсе туни çинчен, суйлав комиссийĕсем нимĕн туманни çинчен, суйлав саккунне пăсни çинчен чылай фактсем илсе кăтартнă. Крымра саккуна пăхмасăр çĕршер суйлавçăсене спискăсене кĕртмесĕр хăварнă; Керчра 997 çынна списка кĕртмесĕр сиктерсе хăварнă; Севастопольте кашни суйлав участкийĕх спискăсенче 50-шар пуçласа 100 çити йанăш тунине тупса палăртнă. Дагестанра, унăн столицинче—Махач-Калара—спискăсем туса çаксан малтанхи тăватă кунĕнчех вĕсенче 208 суйлавçăна кĕртмесĕр хăварнине палăртнă.

Архангельск облаçĕнче те тÿсме çук пысăк çитменлĕхсем тăваççĕ. Коношски районĕнчи посолăк советĕн председателĕ Богданăв суйлавçăсен спискисене хăй шухăшласа кăларнă формăсемпе тума йышăннă. Çав „формăра“ пурĕ вуникĕ графа: пурнăç мĕнли çинчен, партире тăни çинчен, судпа айăпланни çинчен, вĕренни, тата ыт. те. Çакă вăл—вырăнти головотяпсен канцелярла ĕçлени, йĕ суйлава организацилĕс ĕçе йурийĕх пăтраштарса йама хăтланни пулмаст-ши? Архангельск облĕçтăвкомĕн ку ыйту пирки тавçăрса пăхмала ĕнтĕ. Шенкурски, Ровдински тата Холмогорски районĕсенче суйлавçăсен спискисене туса урама кăларса çаксан, вĕсем тепĕр куннех çăмăрпа йĕпенсе йурăхсăра тухнине те унăн пĕлмелех. Çакă вăл ĕç çине тимсĕр тата çăмăлтайăн пăхни пулмасти-ха?

Хальхи вăхăтра тимсĕрлĕх пулмала мар. Тăшманла елементсен йулашкийĕсем пире чăрмантарма пултарнине манма йурамаст. Троцкисла-бухаринла, буржуазла националисла çÿп-çапсем суйлав кампанинче пире сийен кÿме пултараççĕ. Ун пек çигналсем, сăмахран, Свердловск облаçĕнчен килеççĕ. Сухоложски районĕнче, Кулики йалĕнче пĕр пÿтсĕрскер, саботаж тунăшăн судпа айăпланнăскер,—Слепухин текенĕ етем суйлав саккуне вĕренекен кружока салатса йанă. Большевикла сыхлăх çук çĕрте, тимсĕрлĕх пуç пулса тăнă çĕрте, урăх кайна тăшман хăйĕн ĕçĕсене тума тытăнат.

Мĕн тумала-ха халĕ, вăхăта вăраха йамасăрах?

Партипе совет организацисен суйлав саккунне пăснисене йалтăн тÿрлетес тĕлĕшпе халех кирлĕ мерăсем йышăнмала. Спискăсене тĕрĕс тунипе тĕрĕс марринне тĕрĕслесе пĕтермеле, вĕсемпе паллаштарма суйлавçăсене чĕнмеле. Пур суйлавçăсене те суйлава хутшăнтармала тăвас пулат.

Анчах спискă пĕрре йусаса тÿрлетсен те вăл вăра мĕн суйлав кунĕччен тĕрĕс йулат тесе шутлама йурамаст. Çапла шутлаççĕ пулсан—вăра суйлавсем çу вăхăтĕнче, халăхсем пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çÿресси нихçанхинчен те ытларах пулакан вăхăтра иртнине, анлăна илменни пулат. Пĕр Мускавра кăна 200.000 çын ытла çуллахи уйăхсенче дачăсене пурăнма кайат. Кун пеккисем вăхăт, 1937 çулхи декабрь уйăхĕнче, ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕсем вăхăтĕнче пулман. Хĕлле суйлав участкинче тинĕссенче тата океансенче çÿрекен карапсем çинче кăна туна. Ийунĕн 26-мĕшĕнче пиншер граждансем нумай хисеплĕ йăханшăвсем çинче ишсе пулаççĕ. Йулашкинчен тата отпуска, курорта кайакансем, туристсем, екскурсие кайакансем çĕршер пин шутланаççĕ,—вĕсене шутран кăларса пăрахма йурамаст.

Хуласенчи, районсенчи тата йалсовечĕсенчи, суйлав комиссийĕсенчи суйлавçăсем ăçта куçса кайассине вăхăтра палла тумала, урăх вырăна куçса кайакансене „сасăлама права паракан удостоверенисем“ памала. Спискăсене тÿрлетме кирлĕ пулсан, çийĕнчех тÿрлетес пулат. Суйлав умĕн йĕ суйлав кунĕнче суйлавçă спискăра йанăш тупсан, çав йанăша та тÿрлетес пулат. Суйлавçă сасăлана çĕре пымасăр тата пымасăр йулни пулмала мар. Çакăн пек ĕнтĕ совет суйлав саккунĕн тĕп шухăшĕ, çакăн пек ĕнтĕ социалисăмла суйлав çистемин тĕп шухăшĕ! Саккун тăрăх, суйлавсем умĕнхи йулашки 20 кун хушшинче участкăри суйлав комиссин кашни кунах суйлавçăсене суйлав кунĕпе суйлав ăçта пуласси çинчен пĕлтересе йĕ пĕлтересе те пулин урăх майпа анлăн пĕлтерсе тăмала. Кашни кунах! Пур суйлавçăсем те хăйсем пурне те пĕлеççĕ, тесе шутламала мар. Вĕсене суйлав кунĕпе суйлав ăçта пуласси çинчен, пĕр майăх астутарса тăмала.

Суйлав документĕсем—бÿллетенсем, конвертсем йĕркелĕ тĕрĕслеме, суйлав кунĕнче комиççисене мĕнле организацилемели çинчен, суйлавçăсене вăйлă лайăх условисем туса парасси çинчен шухăшлама участкăри кашни суйлав комиççийĕн вăхăт ĕнтĕ. Çаксем ĕнтĕ „техникăла вак-тĕвек ĕçсем“ мар, вĕсем пысăк ответлă ĕçсем! Кашни суйлав комиççин халех ĕнтĕ, суйлав кунĕнче мар, суйлав урнисен вырăнне палăртмала, çекретар спискăсемпе ăçта лармаллине тата участкăри комиççи членĕсем ăçта лармалине палăртмала.

Суйлав кунĕнче чăрмавсем тăвас-мар тесен, черетсем тăвас мар тесен, суйлав комиççи членĕсен вырăнĕсене, вăрттăн сасăлама пÿлĕмсене, урнăсене—пурне те йĕркелемеле.

Суйлавсем çывхараççĕ! Çак куна мĕлйуншар совет çыннисем пысăк хаваслăхпа кĕтеççĕ. Вĕсем суйлав урнисем патне пирĕн Ленин—Сталин аслă партийĕ çинчен тулнă шухăш-кăмăлпа пыраççĕ, мĕншĕн тесен кашни совет патриочĕн чĕри ăна тивĕçлĕ. Вĕсем суйлав урнисем патне хăйсен сассисене çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсемшĕн парасшăн пыраççĕ. Суйлавсене мĕн чухлĕ тĕплĕнрех, организацилĕрех хатĕрленетпĕр, коммунисемпе партире тăманнисен блок çĕнтерĕвĕ—коммунисăмăн çитес çĕнĕ çĕнтерĕвĕсен хăвалла никĕсĕ çавăн чухлĕ çапларах пулаť.

Йалсовечĕсемпе хула совечĕсен председателĕсене пурне те

Пĕр хут анчах мар асăрхатарнă пулин те, суйлавçăсене урăх çĕре кайнă чухне сасăлама права паракан удостоверенисем паманнисем хаљ те çапах пулаççĕ, вăра суйлавçăсем суйлавçăсен спискинче паллă тутармасăрах тата сасăлама права паракан удостоверени илмесĕрех тухса кайаççĕ. Йалсовечĕсем тата хула совечĕсем çавăн çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхмаççĕ, суйлавçăсене вĕсем йалан йĕ вăхăтлăха пурăнакан вырăнтан кайнă чухне сасăлама права паракан удостоверени илме кирли çинчен тата суйлавçăсен спискинче паллă тутарма кирли çинчен ăнлантармаççĕ.

Хула совечĕсем тата йал совечĕсем ĕç çине çавăн пек пăхнине пула йулашки кунсенче çеç Чăваштройтреста 114 çын, Шупашкарти куç лечебницине 20 çын, Канаш хулинчи 5-мĕш участкăна 2 çын, 3-мĕш участкăна 4 çын сасăлама права паракан удостоверенисĕр килнĕ. Çавăн пек фактсем урăх вырăнсенче те пур, сасăлама права паракан удостоверенисемсĕр çĕнĕ стройкăсене уйрăмах нумай килеççĕ.

Йал совечĕсен тата хула совечĕсен суйлавçăсене пурăнма урăх çĕре кайнă чухне суйлав документĕсене кирлĕ пек йĕркелештермели çинчен анлăн ăнлантарса парас пулаť. Суйлавçăсен урăх вырăна куçнă чухне сасăлама права паракан удостоверени илмеле тата кайни çинчен суйлавçăсен спискинче паллă тутармала.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ З. Антрейĕвă.

Белоруççири К(б)Партин вунçиччĕмĕш сйесĕ уçăлнă

Ийунĕн 10-мĕшĕнче Минск хулинче Белоруççири Коммунисĕн (большевиксен) Партин вунçиччĕмĕш сйесĕ уçăлнă. Сйеса 411 делегат ĕçтăвакан сасăпа тата 125 делегат канашлакан сасăпа пынă. Делегатсем хушшинче граждан вăрçинче пулнисем тата орденоносецсем нумай.

Сйес хисеплĕ президиума пысăк çĕкленÿпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн Сталин йулташ йертсе пыракан Политбÿро членĕсене тата Димитров, Тельман, Хозе Диас йулташсене суйланă.

Делегатсем тăвăллăн ала çупса тата „урра“ кăшкăрса сйесăн хисеплĕ председателĕ пулма халăхсен çулпуçне Сталин йулташа суйланă.

Белоруççири К(б)П Тĕп Комитечĕн ĕçĕсем çинчен отчотлă доклада БК(б)П Тĕп Комитет çекретарĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Волкăв йулташ туса панă.

(ТАСС).

Вăрлăх тăвас ыйтупа пулса иртнĕ Пĕтĕм Сойузри канашлу

Ийунĕн 7—10-мĕшĕсенче ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче вăрлăх тăвас ыйтупа Пĕтĕм Сойузри канашлу пулса иртнĕ. Ку канашлура районри вăрлăх хуçалăхĕсен председателĕсемпе агрономĕсем, МТС-семпе çĕрĕç органĕсенчи работниксем тата агрономсем пулнă.

Канашлу тырпулсене пухса кĕме хатĕрленесси, районри вăрлăх хуçалăхĕсен „Госсортфонда“ суртлă вăрлăх парасси çинчен тата ытти ыйтусене те сÿтсе-йавнă.

Кăçал çулла суртлă тырăсем районри вăрлăх хуçалăхĕсенче 900 пин гектар çинчен, колхозсемпе совхозсен вăрлăх участкисенче 13 мĕлйуна йахăн гектар çинчен пухса кĕмеле. Тырпулсене кăтартулă пухса кĕртсен 1939 çултах çĕршывăн мĕн пур колхозĕсемпе совхозĕсене ваљљи пысăк пахалăхлă суртлă вăрлăхсем çителĕклĕ пулаççĕ.

Канашлу районри вăрлăх хуçалăхĕсенчи тата колхозсемпе совхозсен вăрлăх участкисенчи суртлă вăрлăхсене хăвăртрах пухса кĕме кирлĕ ĕçсем туса ирттерме йышăннă.

Канашлу вăрлăх хуçалăхĕсем тата мĕн пур çĕрĕç работникĕсем умне суртлă вăрлăхсем парассине тÿрех совхозсемпе колхозсенчи вăрлăх участкисенче организацилес задачă лартнă.

(ТАСС).

Совет Сойузĕн Геройĕ А. Д. АЛЕКÇЕЙĔВ йулташ (Сойузфото).

Наградăсем пани

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕпе совет драматургине аталантарас ĕçре тава тивĕçлĕ паллă ĕçсем тунăшăн К. А. Треньĕв писателе, вăл литература ĕçĕнче ĕçлеме пуçлани 40 çул тултарнă йатпа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ панă.

(ТАСС).

„Совет стрелокĕн кунĕ“

Осоавиахим Тĕп Совечĕн президиумĕ йышăннă решени тăрăх, ийунĕн 12-мĕшĕнче „Совет стрелокĕн кунĕ“ туса ирттереççĕ. Совет Сойузĕн хулисенче Верховнăй Советсен суйлавĕсен йачĕпе пăшалпа тĕл пемели массăлă праçниксем пулса иртеççĕ.

(ТАСС).

Выљав укçине тÿлени

Шупашкар хулинчи тĕп перекет касси ийунĕн 11-мĕшĕнче „ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займăн“ пĕрремĕш тиражĕ тăрăх тухнă выљав укçине тÿлеме тытăнчĕ.

Ийунĕн 11-мĕшĕнче, пĕр кун хушшинче, перекет касси 3.670 тенкĕ выљав укçи тÿленĕ.

Хулари перекет кассисем ийунĕн 11-мĕшĕнче мĕн пурĕ 4345 тенкĕ те 50 пус тÿленĕ.

* * *

Шупашкарти пуштă çуменчи 60/1 номĕрлĕ перекет касси „ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займăн“ пĕрремĕш тиражĕ тăрăх тухнă выљав укçине ийунĕн 10-мĕшĕнче 1.052 тенкĕ тÿленĕ. Ийунĕн 11-мĕшĕнчен пуçласа вăл тираж тăрăх хулари пур перекет кассисем те выљав укçи тÿлеме тытăнаççĕ.

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăç фронтĕнче, Сорт районĕнче ийунĕн 9-мĕшĕнче пăлхавçăсем республиканĕцсен позицисем çине пысăк атакă тунă, анчах республиканĕцсем вĕсене йалтах салатса йанă. Пăлхавçăсем, пысăк çухатусем туса, кайала хăйсен линийĕсем патне чакнă.

Левантă патĕнчи фронтăн пур çектăрĕнче те пăлхавçăсем активлăн вăрçаççĕ. Теруелтен кăнтăр-хĕвелтухăç йенче республиканĕцсем пăлхавçăсен атакисене йалтах сирсе пăрахнă. Теруелтен хĕвелтухăçнеле республиканĕцсен икĕ çÿлĕ вырăнта позицисене пăрахса кайма тивнĕ.

Ытти фронтсенче пысăк çапăçусемех пулман.

АВИАЦИ ĔÇĔ.

Ийунĕн 9-мĕшĕнче республикă авиацийĕ Левантă фронтĕнче пăлхавçăсен çарĕсен малти линисем çине тата вĕсен тылĕ çине ăнăçлăн бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. Республиканĕцсен 41 истребителĕпе фашиссен 8 пысăк бомбардировщикĕ хушшинче, вĕсене Италин „Фиат“ йышши 45 самольот хÿтлесе пынă, сывлăшра çапăçу пуçланса кайнă.

Республикă льотчикĕсем фашиссен „Фиат“ йышши 7 самольотне тата пĕр бомбардировщикне персе антарнă. Кунсăр пуçне, фашиссем „Фиат“ йышши самольотсене татах иккĕ пĕтернĕ, вĕсем сывлăшра пĕр-пĕринпе çапăнвипе çĕмĕрĕлсе çĕре ÿкнĕ. Республиканĕцсен çапăçура виçĕ самольот пĕтнĕ, пилотсем çăлăннă.

(ТАСС).

Испани пăлхавçисене пулăшаççĕ

Еспаљ агентстви Испанине—фашисла пăлхавçăсемпе Италипе Германи интервенчĕсем йышăнса илнĕ районсене Францирен грузсем тата Франци урлă грузсен транзитне йани çинчен пĕлтерет. Вăл грузсем мĕнле йапала пулнине тĕплĕн кăтартса парса тата чикĕ урлă хăш числара каçса кайнине кăтартса, Еспаљ агентстви çакна палăртат: май уйăхĕнче чикĕри Ендай хули урлă пăлхавçăсем йышăнса илнĕ районсене 379.273 килограм тĕрлĕрен грузсем йанă. Çав грузсем хушшинче агентствă автомобилсем, мотоциклсем, тĕрлĕрен машинăсем, химикалисем, çĕрмамăк, каучук, моторсем, хурçă пралуксем т. ыт. пуррине асăнат. Çакăнта асăннă грузсенчен чылайĕшне—уйрăмах моторсене, автомобилсемпе грузовиксене—Винтерсдорфран (Германи), ытти грузсене Францирен Швейцарин тĕрлĕрен пункчĕсенчен йанă.

(ТАСС).

Китайри револьуцилĕ халăх çарне хăйсен ирĕкĕпе кайнă хĕрсем. Вĕсем винтовкăран тата пулеметран тĕл переççĕ, чи йăвăр ĕçсене тăваççĕ.

(Сойузфото).

Халĕ те чаранмаççĕ

Ийунĕн 9-мĕшĕнче фашиссен самольочĕсем Аликанте порчĕ çине çĕнĕрен пырса бомбăсем пăрахнă. Бомбăсенчен сийенленнипе унта тăракан Англи пăрахучĕ шыва путнă, вăл пăрахута фашиссен авиацийĕ темиçе кун кайала кăна хыттăн сийенленĕ пулнă.

Фашисла пăлхавçăсемпе Италипе Германи интервенчĕсен бандитла ĕçĕсем Англири тата Францири общественнăçа хыттăн тарăхтарнă. Анчах, Испанири пăлхавçăсемпе интервентсен фашисла провокацисене пĕтерсе лартас ĕçре Англи правителстви те, Франци правителстви те нимĕнле татăклă ĕçсем те тума йышăнман.

Ийунĕн 9-мĕшĕнче Францири компарти Тĕпкомĕн политбÿро ларăвĕ пулса иртнĕ. Хăйĕн решенинче политбÿро Германипе Итали авиацийĕ Франци çĕрĕ çине тапăннине хирĕç хыттăн протесленĕ.

Фашиссен Францине хирĕç тăвакан преступленилĕ ĕçĕсене тĕп тăвас тĕллевпе, политбÿро çак ĕçсене пурнăçа кĕртессишĕн кампани туса ирттерме йышăннă:

1. Фашиссен самольочĕсем Франци çĕрĕ çинче курăнсанах зениттлă артиллерин вĕсем çине пеме пуçламала.

2. Пăлхавçăсем йышăнса тăракан территори патĕнче Франци чикине хупламала.

3. Франко генералăн агĕнчĕсемпе ăна пулăшакансене пурне те Францирен хăваласа кăларса йамала.

(ТАСС).

Хамăр сасăсене тăван çĕршывăн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсене парар!

Фадкла Сафиуллăвич САФИУЛЛИН

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шăнкăртам суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Фадкла Сафиуллăвич Сафиуллин йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шăнкăртам районĕнчи „Сталь", „Кзыл Юл" колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче тăратнă.

Сафиуллин йулташ 1906 çулта Буинск уйесĕнче, Шемурша вулăçĕнчи Байдеркакăв йалĕнче (халĕ Шăнкăртам р., Чăваш АССР) вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Ашшĕ-амăшĕсем револуциччен те, револуци иртсен те çĕр ĕçĕпе пурăннă.

Сафиуллин йулташ 1921 çултан 1923 çулччен Крым уйесĕнчи Хомутовск йалĕнче кулаксем патĕнче батракра пурăннă. 1923 çултан 1926 çулччен Серпухова хулинче кўршек-чўлмексем тăвакан савăтра ĕçленĕ. Унтан 1929 çулччен Донбасра, шахтăра ĕçленĕ. 1929 çултан 1931 çулччен Днепр шывĕ çинчи електричĕства станци строительствинче ĕçленĕ. 1933 çулта вăл, Артемăвка хулинче 2-мĕш сыпăклă совпартшкултан вĕренсе тухнă.

Сафиуллин йулташ совпартшкултан вĕренсе тухсан, партипе совет ĕçĕнче ĕçлет. 1933 çултан 1934 çулччен Ровенки хулинче рудник комитечĕн инструктăрĕ пулса ĕçлет. 1934 çулта Шăнкăртам районĕнче Хирти Сĕнтĕр йалсовет председателĕ, унтан Шăнкăртам райĕçтăвком инструктăрĕ пулат.

1934 çулхи çентабертен 1937 çулхи йанварччен ПСК(б)П Шăнкăртам райкомĕнче пропагандисра пулнă. Халĕ вăл Шăнкăртам райĕçтăвкомĕн председателĕ пулса ĕçлет.

Сафиуллин йулташ 1931 çултанпа ПСК(б)П членĕ. Вăл социалисăм строительстви ĕçĕнче Ленин—Сталин партийĕ вĕрентнипе ĕçре ўссе çирĕпленнĕ болшевик.

Шăнкăртам суйлав округĕнчи суйлавçăсем суйлав кунĕ—июнĕн 26-мĕшĕнче хăйсен сасĕсене Сафиуллин йулташшăн парасçĕ.

Александр Çтепанăвич РОДИОНАВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Çеменăвски (Пăрачкав р.) суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Вăл 1907 çулта Пăрачкав районĕнчи Милутина йалĕнчи чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Йалти шкултан вĕренсе тухнă.

1926 çулта Родионăв йулташ Вăтам Атăл крайĕнчи Сурск районĕнчи Белый Клуч йалĕнчи В. И. Иванов тимĕрç патне кайса, тимĕрç ĕçне вĕренет. 1930 çулта хăй тĕллĕнех тимĕрçре, унтан çлесăрта ĕçлет, йулашкинчен Пăрачкаври вăрлăх совхозне механике ĕçлеме кĕрет. Халĕ те çакăнтах механик пулса ĕçлет.

Александр Çтепанăвич совхозри чи палла ударник. Ана кăтартулă, лайăх ĕçленĕшĕн совхозра тата районри организацисем темиçе хутчен те хаклă премисем панă.

Пур хуçалăхла-политикăлă кампанисенче те вăл активлă хутшăнса ĕçлет. Политикă йенчен шанчăклă, тўррĕн ĕçлесе пынипе вăл совхозри рабочисем хушшинче пысăк шанăç илнĕ.

Коммуниссен партипе совет влаçĕ вĕрентнипе ўссе çитĕннĕ Родионăв йулташ хăйĕн ĕçĕнче социалисăмшăн чĕререн тăрăшса ĕçленине кăтартрĕ. Вăл хăйĕн вăйĕпе мĕн пур пĕлўлĕхне халăх ĕçĕшĕн парса ĕçлекен партире тăман болшевиксенчен пĕри.

Ĕçри пултарулăхне кура ĕнтĕ Пăрачкав районĕнчи Çеменăвски суйлав округĕнчи суйлавçăсем Александр Çтепанăвич Родионăв йулташа Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Петр Çтепанăвич ПОЛТĔВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Хучаш суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Петр Çтепанăвич Полтĕв йулташ 1902 çулта Пăрачкав район центрĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Вăл педагогикă курсĕнчен вĕренсе тухсан, хăй çуралнă районрах Çийавă йалĕнче учителпулса ĕçлет. Çак вăхăтрах вăл совмеçтителствă йĕркипе уйесри халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăй пулат. Унтан çутĕçĕнче ĕçлекенсен союзĕн вулăсри выранти комитет председателĕ пулат.

1924 çулта кĕркунне Полтĕв йулташ Хĕрлĕ Çара кайат. Кунта та вăл педагогикă ĕçне пăрахмаст, обшчĕствăла ĕç йĕркипе хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене вĕрентет.

Хĕрлĕ Çартан таврăнсан, Полтĕв йулташ каллех Пăрачкавра вулăсри вулав çурт пуçлăхĕ пулат. 1926 çулхи октăбĕртен ăна вулăсри çутĕçĕнче ĕçлекенсен союзĕн выранти комитечĕн председателне суйласçĕ.

Полтĕв йулташăн ашшĕ амăшĕсем 1929 çулта колхоза кĕнĕ. Петр Çтепанăвич Полтĕв хăйсен йалĕнчи колхоза организацилекенсенчен пĕри пулнă. 1928 çулхи октăбĕртен 1930 çулччен вăл Пăрачкав райĕçтăвкомĕн инспектăрĕ.

1931 çулхи йанвартен ăна районри Осоавиахим совечĕн ответлă çекретарне суйланă. Осоавиахим ĕçĕнче активлăн ĕçленĕшĕн 1931 çулта Чăваш АССР-чи Осоавиахим Тĕп Совечĕ хисеплĕ грамăтă парса наградăланă.

1932 çул пуçламĕшĕнчен вăл ПСК(б)П Пăрачкав райкомĕн агитацилĕ-массăлă пайĕн пуçлăхĕ, унтан оргпай пуçлăхĕ, 1933 çулхи октăбĕртен ПСК(б)П Йетĕрне райкомĕнче оргпай пуçлăхĕ. 1934 çултан 1936 çулхи йанварччен ПСК(б)П Йетĕрне райком çекретарĕн замеçтителĕ.

Горький хулинче марксисăмпа ленинисăм курсĕнчен вĕренсе тухсан, 1937 çулхи йанвартен каллех ПСК(б)П Йетĕрне райком çекретарĕн замеçтителĕ, унтан çав районрах ПСК(б)П райком çекретарĕ пулса ĕçлет. Халĕ вăл ПСК(б)П Обкомĕн йертсе пыракан парторгăнсен пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет.

Полтĕв йулташ партипе совет ĕçĕнче ĕçлесе пысăк опыт илнĕ. Вăл халăх шанăçне пурнăçлама пултарат. Кашни ĕçе вĕçне çитерме пĕлет. Вăл 1930 çултанпа ПСК(б)Парти членĕ пулса, пур ĕçре те Ленин—Сталин парти çулйĕрĕнчен пĕр пăрăнмасăр, тўррĕн ĕçлесе пынă.

Полтĕв йулташ халăх шанăçне пурнăçлама пултарнине кура, Йетĕрне районĕнчи Хучаш суйлав округĕнчи суйлавçăсем ăна Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç. Халĕ Петр Çтепанăвич Полтĕв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Хучаш суйлав округĕнчи суйлав комиççийĕ регистрациленĕ.

Епĕр Петр Çтепанăвич Полтĕв йулташ малашне те Ленин—Сталин парти çулйĕрĕпе тўррĕн ĕçлесе пырасса, Чăваш халăхĕн интересĕсене, социалисăм строительствин малашнехи задачисене пурнăçлас ĕçре вăйа хурса ĕçлессе шанатпăр.

Андрей Иванăвич ИВАНОВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йамаш суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Шăхасан районĕнчи Йамаш суйлав округĕнчи суйлавçăсем Андрей Иванăвич Иванов йулташа Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Иванов йулташ 1903 çулта Шăхасан районĕнчи Вăрман Кипек йалĕнче, хресчен çемйинче çуралнă. Çамрăклăх обшчĕствăлă ĕçсенче активлăн хутшăнса ĕçленĕ. Колхозра чи-примерлă ударник пулнă. Куйбышĕв йачĕпе тăракан колхозра икĕ çул хушши уйхир бригадирĕ пулнă. Бригадир пулса агротехникăла ĕçсене анлăн пурнăçласа пысăк тухăçлă тырпул туса илнине пула, ăна 1937 çулта Уйкас Кипек йалсовет председателне суйласçĕ. Йалсовет председателĕнче вăл халĕ те ĕçлет. Вăл йертсе пыракан йалсовет пур тĕлĕшпе те районра малта пырат.

Андрей Иванăвич Иванов йулташ Ленин—Сталин партийĕшĕн, ирĕклĕ те савăнăçлă, телейлĕ пурнăçшăн, ĕççыннисемшĕн чĕререн паранса ĕçлекен болшевик. Вăл Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тивĕçлĕ те шанчăклă кандидат.

Доверĕннăй суйлавçăсем хушшинче

6 сехет. Кун каçалана сулăннă. Йалти ачалă хĕрарăмсемпе вата çынсем урама пухăнса çитрĕç. Вĕсене пайан доверĕннăй А. Иванов (Вăрман Йенĕш, Шăхасан р.) РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама тăратнă кандидатсем çинчен каласа кăтартма пухнă. Вăл суйлавçăсене халăхсен çулпусĕ Сталин тата унăн çывăх соратникĕсем Молотăв, Ворошилăв, Каганович, Йежов, Калинин, Микойан, Андрейĕв, Жданăв йулташсем ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама килĕшў пани çинчен, вĕсен кандидатурисене суйлав округĕсенче регистрацилени çинчен каласа пачĕ.

— Сталин йулташ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама килĕшў панишĕн епĕр вĕçĕмсĕр савăнатпăр, мĕншĕн тесен вăл пире телейлĕ пурнăç туса пачĕ,— тет 72 çулхи суйлавçă И. Петров.

Унтан Иванов доверĕннăй ЧАССР Верховнăй Советне Йамаш суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама тăратнă Уйкас-Кипек йалсовет председателĕ Иванов Андрей Иванăвич çинчен каласа пачĕ. Колхозниксем Андрей Иванова лайăх пĕлеççĕ. Вăл колхоз бригадирĕнче ĕçленĕ чухне хăйĕн чаплă ĕçĕпе мухтава тухнă. Халĕ вăл йертсе пыракан йалсовет районра пур йенĕпе те малта пырат.

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Антонăвă Йекатеринă Антонăвнă çинчен те лайăх пĕлеççĕ кунти колхозниксем. Производствăра ĕçленĕ хушăрах вăл хăйĕн пĕлĕвне ўстерсе пырат. Уйахри ĕç планне 150—200 процентшер тултарса пырат. Доверĕннăй Иванов йулташ Антонăвапа Иванов пурнăçĕ тата ĕçĕсем çинчен йаланах ăнланмала, тĕплĕн каласа парат.

Н. Михайлăв.

Агитатăрсемпе доверĕннăйсен канашлăвĕ

ШĂХАСАН. Йиунĕн 7-мĕшĕнче районра агитатăрсемпе доверĕннăйсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлăва пурĕ 140 çын пухăнчĕ. ПСК(б) Парти Шăхасан райком çекретарĕ Никитин йулташ агитатăрсемпе доверĕннăйсен умĕнче тăракан задачăсем çинчен доклад туса пачĕ. Доклада тимлĕн итлерĕç. Канашлура пулнисем агитацилĕ-ăнлантарулă ĕçе тĕпренех çĕнетме, кашни суйлавçăнах суйлав йĕркисене пĕлсе тăракан тума, Верховнăй Советсене депутата суйлама регистрациленĕ кандидатсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен тĕплĕн ăнлантарма пулчĕç.

В. Чернов.

Заљатисем кăмăла кайаççĕ

„Çисĕм" колхозăн (Йĕпреç р.) илемлĕ паркĕпе йунашар Хĕрлĕ плошчĕт сарăлса выртат. Хĕрлĕ плошчĕт варринче трибунă. Трибунă çинче кăрмахвун илемлĕ йурăсем шăрантарса ларат. Кăрмахвун сасси кану паркĕ тăрăх йанраса кайат.

Кăрмахвун „Веселый ветер" йурра йурласа пĕтерне çĕре колхозниксем пуçтаранса ларчĕç. Çеменăв агитатăр трибунă картлашкийĕ çине анса ларчĕ.

— Тарас пичче, Уртем пичче, килĕр-ха кунтарах, сирĕнпе каласасшăн епĕ,—терĕ Аркадий Çеменăв.

Тараспа Уртем агитатăр çумне пырса ларчĕç.

— Тарас пичи, каласа пар-ха, çитес суйлавра миçе бўллетенпе сасăламала?

— Икĕ бўллетенпе. Пĕри РСФСР Верховнăй Советне депутат суйламали, вăл—çут кăвак тĕслĕ, тепри Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали, вăл—шурă тĕслĕ пулат,—терĕ Тарас пичче.

— Тĕрĕс. Уртем пичче, ĕсĕ калах-ха тата, пирĕн Кĕлĕмкасси суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кама кандидата тăратнă-ха?

— Коротков йулташа. Епĕ ăна лайăх пĕлетĕп. Пултарулă та шанчăклă çын вăл. Кăçал пирĕн колхоза темиçе хут та килсе карĕ. Килсен мĕнле ĕçлемелине вĕрентсе хăварат.

Агитатăр Çеменăв ĕлĕкхи суйлавпа халљхи суйлава танлаштарса пачĕ. Унтан Тарас пичче сăмах каларĕ:

— Спасибă Сталин йулташа, пире телейлĕ пурнăç туса панăшăн. Епĕ унăн ĕçне чĕререн парăннă çынсемшĕн сасăлатăп,— терĕ вăл.

Суйлавçăсемшĕн заљатисем кăмăла кайаççĕ. Çеменăв агитатăр суйлав Положенине вĕрентсе пĕтерне. Халĕ суйлав техникине тепĕр хут вĕренеççĕ. Суйлавçăсем заљатисене интересленсе çўреççĕ. Хĕвел анса ларсан тин колхозниксем килĕсене саланчĕç.

Глеб Марушĕв.

Суйлавçăсем спискăсенчи йăнăшсене палăртаççĕ

Çĕмĕрле хулинчи пĕрремĕш участкăри суйлав комиççин çуртне ватă карчăк пырса кĕчĕ. Алăкран кĕрсенех вăл суйлавçăсен спискине тĕрĕслеме пыни çинчен дежурнăйа пĕлтерчĕ. Унтан стена çумне çакнă спискă умне пычĕ те хăйĕн йатне шырама тытăнчĕ.

— Пучкинă Анастасийа Иванăвнă 1878 çулта çуралнă. Ку тĕрĕс. Комбинатри рабочисен 6-мĕш номĕрлĕ çуртĕнче пурăнат. Кунта йăнăш сырнă вара. Епĕр 4-мĕш çуртра пурăнатпăр,—тесе ăнлантарат Пучкинă йулташ, спискăна сасăпа вуласа тухнă хыççăн.

Утмăл çулхи карчăк суйлавçăсен спискинче пысăк йăнăш тупрĕ. Пучкинă йулташсем чăнах та 4-ш çуртра пурăнаççĕ. Анчах спискăра вăл çуртра пурăнакансене, 30 çемйене, пĕтĕмпех 6-мĕш çуртра пурăнаççĕ, тесе çырса хунă.

Халљ участкăсенче спискăсене массăлăн тĕрĕслесси пырат. Суйлавçăсем спискăсенче нумай йăнăшсем пуррине палăртаççĕ. Вăл йăнăшсем уйрăмах пĕрремĕш участкăра нумай. Унта 9 суйлавçăна спискăна кĕртмен. Нумай хушаматсене пăтраштарса çырнă. Жирновă Александрă Андрейăвнă выранне—„Жирнов Александр Андрейевич" тесе çырнă. „Шигин" выранне „Шилин", Быкăв Филипп Сергейевича „Белов" хушамат панă т. ыт. те.

Суйлавçăсен спискисенчи çак нумай йăнăшсем пĕтĕмпех хула совет айăпĕпе пулнăскерсем. Хула совечĕнче ĕçлекенсем суйлавçăсен спискисене пит çийĕлтен пăхса туни курăнат. Йăнăшсене тўрлетессине хăвăртлатмала. Ку ĕç çителĕксĕр пырат-ха.

М. Митрофанăв.

Çирĕппĕн сыхлатпăр çĕршыва

Çĕршыв тăрăх пирĕн хăт ăçта та
Савăнăç йурри йанрат;
Ĕçлемешкĕн, вĕренме, канма та
Кашнинех халљ тивĕç панăран.

Сывă пултăр пирĕн хаклă Сталин,
Вăл—халăхсенĕн савăнăçĕ;
Унпала телейлĕ пĕтĕм халăх,
Вăрăм пултăр унăн пурнăçĕ.

Çатпахчи пек савăнăç çĕршывĕ
Ĕç çыннийĕсемшĕн йешĕрет.
Çавăнпа епир, ун кашни ывăљ,
Çивĕччĕн тăратпăр чикĕре.

Пире çĕнес çук нихçан, никам та,
Пĕтĕм халăх харăссăн тăрса
Çĕршыва хураллама тухатпăр,
Çăланаймĕç тăшмансем тарса.

Сывă пултăр пирĕн хаклă Сталин,
Вăл пире вĕрентрĕ çĕнтерме.
Çавăнпа халљ савăнат пур халăх,
Çавăнпа хавасла ĕçлеме!

Красноармейец

Л. Алексейĕв.

ССР Союзĕн оборонине тĕреклетер!

Азербайджанри (Баку хули) пионерсен çурчĕ çумĕнче пионерсем утпа çўреме вĕренеççĕ,—вĕсем ворошилăвла йуланутçăсем пулма хатĕрленеççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çамрăк йуланутçăсен ушкăнĕ.

[Союзфото].

ШКУЛСЕНЧЕ

Вĕренекен ача наукăн малтанхи чи елементарлă пĕлтерĕшĕсене шкулта, пуçламĕш классенче йĕркелĕн, çистемăлăн ăнланса илеймесен, ăна малала вĕренме йăвăр пулат. Пуçламĕш шкул ачана пĕрремĕш хăнăхтарусем (навыксем) парат. Пирĕн халĕ нумай çĕрте туллимар вăтам тата вăтам шкулсен аслăрах класĕсенче вĕрентекен преподаватĕлсенчен час-часах пуçламĕш шкула, пуçламĕш класcене ўпкеленине илтме пулат.

— Пуçламĕш шкулта ачасене тивĕçлĕ пĕлўсем паман, пирĕн пуçламĕш шкулшăн çĕнĕрен вĕрентме лекет,—теççĕ чылай преподаватĕлсем.

Ку сăмахсенче, чăн та, тĕрĕслĕхĕ пур. Ку таранччен çутĕç оргăнĕсем, туллимар вăтам тата вăтам шкул директăрĕсем пуçламĕш шкулсемпе вăтам шкулсенчи пуçламĕш (I—IV) классем çине тимсĕррĕн пăхнă.

Çак çитменлĕхе пĕтерес тесе, Мăн Сĕнтĕр вăтам шкулĕ (Тутаркас р.) иртнĕ вĕреçў çулĕнче çине тăрса ĕçлерĕ. Пуçламĕш классенчи учителсене шкулти мĕн пур преподавателсен коллективĕ куллен пулăшса пычĕ. Тăрăшни ахаљ пулмарĕ: пуçламĕш классенче кăçал иккĕмĕш çула пĕр ача та йулман, пурте аслăрах классене куçнă. 1-мĕш класра 11 ача çулталăкĕпех „отличнă" паллăсемпе вĕренсе пынă. Пĕрремĕш класра вĕрентекен М. И. Багров йулташ учителте 45 çул ĕçлет. Унăн ăсталăхĕпе ĕç опычĕ пысăк. Йулашки çулсенче аслă шкулсем пĕтерсе килнĕ çамрăк учителсем Багров учителе ĕçре пулăшнипе пĕрлех, унтан питĕ нумай опыт илеççĕ.

Çавăн пекех паха тĕслĕхсем кăтартат IV-мĕш класра вĕрентекен Н. И. Веретенкин учител те. Вăл учителре 33 çул ĕçленĕ. Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче каçалхипе 4-мĕш классене 5-мĕш кăларăмпа вĕрентсе кăларчĕ. Вăл иртнĕ çул вĕрентсе кăларнă ачасем кăçал 5-мĕш „А" класра пурте лайăх вĕренсе, улттăмĕш класа куçрĕç. 5-мĕш „А" клас, шкулта, отличниксен класĕ пулчĕ. Кунта вĕренекен В. Краснов, А. Озерăвă, Н. Ведина ачасем çулталăк хушшинче пур предметсемпе те йаланах отличнă паллăсем илсе пынă, „хорошо" йе „посредственно" паллăсем вĕсен пĕрре те çук.

Пуçламĕш классене çĕклес тĕлĕшне кăçалхи вĕреçў çулĕнче Ишлей районĕнчи Çўлтикасси туллимар вăтам шкулĕ те чылай палăрмала утăмсем турĕ. Иртнĕ çулсенче Çўлтикасси шкулĕ районри чи кайра пыракан шкул пулнă. Уйрăмах кунта пуçламĕш классем начар ĕçленĕ.

Кăçал 4-мĕш класра 30 ачаран вырăс чĕлхипе пĕлў тĕрĕслевĕнче çырупа 10 ача, калаçупа 15 ача „отличнă" тата „хорошо" паллăсем илчĕç, „посредственно" паллă илекенсем çырупа 15 ача, калаçупа 14 ача пулчĕç. Иртнĕ çулсенче кунта 4-мĕш клас вĕренсе пĕтерекенсем вырăсла пĕр сăмаха тепĕр сăмахпа çыхăнтарса çырма та, калаçма та пĕлмен. Вырăс чĕлхине вĕренме ачасене кружоксем туни, шкулти библиотекă лайăх ĕçлени, вĕренекенсем хăйсем тĕллĕн вырăсла илемлĕ литературă вулани пулăшат.

Пуçламĕш шкулта, пуçламĕш классенче лайăх ăнланса вĕреннĕ ачасем туллимар вăтам тата вăтам шкулăн аслă класĕсенче пуринче те вĕçне çитиччен лайăх вĕренеççĕ.

Мăн Сĕнтĕр вăтам шкулĕнче 5-мĕш классем иккĕ. Пĕринче—5-мĕш „А" класра, çўлте каларăмăр, Мăн Сĕнтĕр шкулĕн 4-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем, тепринче—5-мĕш „В" класра Шупуç пуçламĕш шкулне вĕренсе пĕтернисем вĕренеççĕ. Çак икĕ клас хушшинче питĕ пысăк уйрăмлăх пур. Шупуç шкулĕнчен вĕренсе тухнă ачасем 5-мĕш „В" класра питĕ кайа йулса пыраççĕ, пĕтĕмĕшпе ку клас—шкулти чи начар клас пулса тăрат.

Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче пĕлў тĕрĕслевĕн малтанхи материалĕсене пăхса тухсан тата çакă курăнат: 6-мĕш, 7-мĕш классенче „посредственно" паллă илекенсем пуринчен нумай. Мĕнрен килет ку? Мĕншĕн талккишĕпех „посредственно"? Преподавателсем ку йапалана: 5-мĕш, 6-мĕш, 7-мĕш классенчи ачасен ăнланулăн вĕренни çук, тесе сўпĕлтетеççĕ. Тўрех каламалла: вăтам шкулта лайăх „продукци" парассишĕн, паха пĕлўлĕ ачасем вĕрентсе кăларассишĕн 8-ш класран пуçласа тин хĕрўлĕн ĕçлеме тытăнаççĕ. Ку хĕрўлĕх 10-ш класра уйрăмах çўле çĕкленет, тăхăр çул вĕреннĕ хушăра мĕн сикçе йулнине пĕтĕмпех 10-мĕш класра тўрлетме пăхаççĕ.

Капла туни вăл пачах тĕрĕс мар. Вăтам шкултан пур йенлĕ паха пĕлўлĕ çынсем вĕрентсе кăларас тесен, 1-мĕш класран пуçласа вĕçне çитиччен, пур сыпăксенче те, пур классенче те лайăх вĕрентмеле, ачасен те çавнашкалах лайăх вĕренмеле, унсăрăн пĕр çиçтемăлă, çирĕп йĕркелĕ пĕлў пулма пултараймаст.

Пирĕн халљ чылай çĕрте аслă шкул пĕтерне çынсем çитмен пирки, вăтам шкулăн кĕçĕнрех (5—6—7) класĕсенче пачах ансăр пĕлўлĕ çынсене те лартаççĕ. Лартнă та маннă—ĕçре пулăшасси те, тĕрĕслесси те çук. Ку çитменлĕхе пĕтермеле, вăтам шкулăн кĕçĕнрех класĕсене те аслă классене пăхнă пекех тимлĕн пăхмала.

Шкулсенче час-часах „йуратнă предмет", „йуратман предмет" тенисене илтме пулат. Ку калаçу учителсен хушшинче те, ачасем хушшинче те пĕр пекех çўрет. Акă Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче 10-мĕш класра вĕренекен Ф. Даљков вырăс чĕлхипе литературăна йуратса „отличнă" паллăсем илсе вĕренет, сăвăсем çырат. Çав вăхăтрах вăл математикăпа физикăна йуратмаст, пĕлў тĕрĕслевĕнче Даљков, чипер вĕренме пултаракан-скер, алгебрăпа „плохо" паллă илет. Тепĕр йенчен тата Тойгилдинпа Арçентйĕв йулташсем, математикăпа физикăна йуратса вĕренекенскерсем, пур предметпа та „отлично" паллăсем илес чухне, вырăс чĕлхипе литературă çине çийелтенрех, хăйсем çине ытлашширех шанса пăхаççĕ. Çавна пулах вĕсем вырăсла çырура пысăк йăнăшсем тăваççĕ.

Çўлтикасси туллимар вăтам шкулĕнче 6-мĕш „А" класра 25 ачаран йестествознанипе 18 ача, географипе 13 ача „отлично" тата „хорошо" паллăсем илнĕ, „плохо" паллă илнисем кунта пĕрре те çук. Йестествознанипе географи, учителсем каланă тăрăх, ачасен чи йуратнă предмечĕсем, çав вăхăтрах кунти вĕренекенсем математикăна начар пĕлеççĕ, вырăс чĕлхипе йăнăшсем нумай тăваççĕ, вăл предметсене ачасем „йуратмаççĕ" пулат.

Совет шкулĕнче, совет шкулĕн программинче йуратман предмет пулма пултараймаст. Аслăлăхăн комплексне кĕрекен предметсене пурне те пĕр пек йуратмала, пĕр пек йуратса вĕрентмеле, вĕренмеле. Ачасем пĕр-пĕр предмета ытларах йуратни учителрен, вăл урока тĕрĕс те интереслă пĕркеленинчен килет. Апла пулсан, предмета йуратчăр тесен, учителĕн хăйĕн ĕçне лайăхрах, интереслăрах йĕркелемеле.

Пĕлў тĕрĕслевĕсем шкулсенче, учителсене хăйсен çитменлĕхĕсене курма, вĕсене тўрлетме пулăшаççĕ. Пирĕн кăçалхи ĕçе болшевикла пĕтĕçтерсе, çĕнĕ вĕреçў çулĕ валљи çĕнĕ çĕнтерў программисем палăртмала.

Арк. Ĕçхĕл.

Çине тăрса ĕçлени кирлĕ

Суйлав кунĕ хăвăрт çывхарса килет. Июнĕн 26-мĕшĕччен çур уйăх та йулмарĕ. Умра—пит те ответлă, пысăк ĕçсем. Суйлавçăсене пурне те кандидатсем çинчен ăнлантарса çитермеле, суйлав иртмели пӳлĕмсене йĕркелесе хумала, списăксенчи йăнăшсене тӳрлетсе пĕтермеле т. ыт. те. Çак ĕçсене кĕске вăхăтрах туса пĕтерессипи пирĕнтен ĕçри хастарлăха темиçе хут ӳстерме ыйтать. Анчах суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе пур йенчен те хастарлăн ĕçлени чылай районсенче палăрмасть-ха. Уйрăмăнах вăл Тутаркаспа Ишлей районĕсенче курăнмасть. Ку районсенче чылай çĕрте суйлав иртермели участкă сурчĕсене йĕркелесе çитермен. Тутаркас районĕнче лайăх ĕçлекен Йункă участкинче те суйлав пӳлĕмĕсене тума тин çеç тытăннă. Илемлетсе çитерессипи айакра-ха. Шупуç йалсоветĕнче илемлетме шухăшлани те çук. Вĕсем районтан уйăрса панă хĕрлĕ хăмача халĕ те укçа тӳлесе илмен.

Чылай йалсоветсенче суйлавçăсен списăкĕсене тăвас ĕç çине çиелтен пăхнă. Çавăнпа час-часах списăксенче йăнăшсем, вараланчăксем, йалсовет председателĕ алă пусмасăр хăварнине тĕл пулма пулать. Калайкасси йалсоветĕнче 1920 çулта çуралнă çамрăксене, хăш уйăхра çуралнине пĕлеймен пирки, вуннă çын ытла суйлавçăсен спискине кĕртмен.

Тутаркас районĕнче списăксем çырас ĕçре пит те пысăк политикăлă йăнăш тунă. Хăшпĕр йалсоветсенче (сăмахран, Оринина) вырăс суйлавçăсене пĕр спискăна, чăвашсене урăх спискăна кĕртсе уйрăмăн çырнă. Суйлав саккунне пăсакан çакăн пек кăтартăва райĕçтăвком председателĕ пулса ĕçленĕ Калинин панă.

Тутаркас районĕнче те, Ишлей районĕнче те РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама тăратнă кандидатсемшĕн начар агитацилеççĕ. Участкăсенче, колхозсенче кандидатсем çинчен ăнлантарса пани пачах çителĕксĕр. Чылай суйлавçăсем халĕ вĕсен участкисенче камсем суйланнине пĕлмеççĕ. Кандидатсем çинчен ăнлантарса парас тĕлĕшпе халĕ малтанхи утăмсем кăна тума пуçланă. Чылай çĕрте колхозниксен, хĕрарăмсен, çамрăксен пухăвĕсене иртереççĕ. Анчах çак ĕçре доверённăйсемпе агитаторсем уйрăмăн кашни суйлавçăсем патне çитеймен-ха. Уйрăмăнах стариксем, хушшинче сахал ĕçлеççĕ.

Кандидатсемшĕн агитацилес ĕçре пур майсемпе те усă курмаççĕ. Колхозсенче, участкăсенче кандидатшăн сасăлама чĕнекен лозунгсем, стена хаçачĕсем çук. Кандидатсен сĕнĕсене тупма май пур пулсан та тупма тăрăшмаççĕ.

Çӳлтикасси суйлав участкинче (Ишлей р.) А. Жданăв йулташа Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлаççĕ. Анчах унăн сăнӳкерчĕкĕсем йалсоветра, шкулта тата ытти вырăнсенче пурне те курмала вырăнта çук.

Çӳлтикасси суйлав участки Шурча суйлав округне кĕрет. Ку округра доверённăйсене пухса Жданăв йулташ кандидатуришĕн агитацилемели çинчен ăнлантарса паман. Доверённăйсемпе начар ĕçленине çак тĕслĕх те аван кăтартса парать.

Доверённăйсене çеç мар, суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе ытти ĕçсем тăрăх та тивĕçлĕн йертсе пымани курăнать.

Ишлей районĕнчен: райкомран та, райĕçтăвкомран та суйлав ыйтăвĕпе пĕр çын та килсе курмарĕ,—тет тарăхса, Çӳлтикасси суйлав комиççи председателĕ Йелкин йулташ.

И. Алтын-Баш.

Выставкăна хатĕрленес майпа

Чăваш республикĕнчи халăх творчĕствин çурчĕ „Ленин тата Сталин халăх творчĕствинче" йатлă Пĕтĕм Сойузри выставкăна хатĕрленес майпа пухнă хайсем тĕллĕн вĕреннĕ художниксен конференцийĕ июнĕн 5-мĕшĕнче хупăнчĕ. Конференцире хайсем тĕллĕн вĕреннĕ чи лайăх художниксем 18 çын пулнă.

Конференцире художниксем революцин генилĕ çулпуçĕсен—Ленинăн, Сталинăн сăнĕсене ӳкерес ĕçре малашнехи творчĕствă ĕçĕнче кирлĕ тĕп материалсемпе паллашрĕç.

Конференци 4 кун иртрĕ. Художниксем унта çак доклад сене итлерĕç: „Ленинпа Сталинăн пурнăçĕсемпе ĕçĕсем", „Социалисăмла реалисăм çинчен", „Ескизсем тăвас ĕçри практикăлă ĕçсем çинчен", „Моделпе мĕнле усă курмала" т. ыт. те. Ленин—Сталин çинчен ӳкерне кино-картинăсене, „Ленин в Октябре", „Сталин йулташ Советсен VIII-мĕш Чрезвычайлă сиесĕнче тунă доклад" курчĕç. Чăваш республикĕнчи профеççилĕ художниксемпе тĕл пулчĕç.

Магницкий.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă кун

Суйлавçăсем! Суйлав техникине кашни тĕплĕн пĕлсе тăрăр!

1. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă кун суйлавçăн ирхине 6 сехетпе çĕрле 12 сехет хушшинче суйлав участкине хăйĕн пымала. Хăйпе пĕрле паспăрт, йе колхоз кĕнеки, йе профсойуз билечĕ, йе вăл камне пĕлтерекен урăх удостоверени пулмала.

2. Çак документа суйлавçă суйлавçăсен спискинче паллă тума участкăри суйлав комиççи çекретарне кăтартать.

3. Суйлавçăсен списки тăрăх тĕрĕсленĕ тата суйлавçăсен спискинче паллă тунă хыççăн, суйлавçă РСФСР Верховнăй Совет депутатне суйламали çутă кăвак тĕслĕ суйлав бӳллетенĕпе конверт тата Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне суйламали шурă тĕслĕ суйлав бӳллетенĕпе конверт илет.

4. Суйлавçă суйлав бӳллетенĕсене çырса тултарма уйрăм пӳлĕме куçать. Çутă кăвак тĕслĕ бӳллетенре РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ пулма тата шурă тĕслĕ бӳллетенре Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулма хăй камшăн сасăлать, çав кандидатсен хушамачĕсене хăварать, ыттисене хуратса хурать.

5. Суйлавçă шупка кăвак тĕслĕ бӳллетене çутă кăвак конверт ăшне, шурă тĕслĕ бӳллетене шурă конветр ăшне хурса конвертсене çыпăçтарать.

6. Суйлавçă участкăри суйлав комиççийĕ вырнаçнă пӳлĕме куçать. Суйлав бӳллетенĕ хунă шупка кăвак конверта „РСФСР Верховнăй Советне суйламали суйлав йешчĕкĕ" тесе çырнă тата çиелтен çутă кăвак конверт çыпăçтарнă суйлав йешчĕкне йарать. Суйлав бӳллетенĕ хунă шурă тĕслĕ конверта „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали суйлав йешчĕкĕ" тесе çырнă тата çиелтен шурă конверт çыпăçтарнă суйлав йешчĕкне йарать.

Фото ӳкерчĕкĕ В. Шипицинăн.

Кăшавăшри суйлав умĕнхи митинг

ИШЛЕЙ. Июнĕн 8-мĕшĕ. Кăшавăш йалĕ. Плошчĕте кашни урамранах суйлавçăсем пухăнма пуçларĕç. Чаканарти „Тĕрĕс çул" тата „Ырашпулăх" колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем ниçе автомашинăпа, велосипедсемпе тата çуран пурĕ 250 çын ытла пухăнчĕç. Музыкă саванăçлă кĕвĕсем калать. „Осоавиахим" тата „Хĕрлĕ плуг" колхозсенчен 25 суйлавçă йуланутпа килсе çитрĕç. Лашасен йĕвенĕсемпе çилхисене хĕрлĕ тутăрпа илемлетнĕ.

Плошчĕт тулли халăх. Райĕçтăвком председателĕн заместителĕ Гераçимăв йулташ митинга уçса кĕске сăмах каларĕ. Вăл суйлавçăсене РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Калинкина тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Херсонăв йулташсемшĕн сасăлама чĕнчĕ.

ПСК(б) Парти райком çекретарĕ Тимков йулташ Калинкина йулташăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен кĕскен каласа пачĕ. Вăл Калинкина йулташ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма тивĕçлĕ кандидат пулнине палăртса, пĕтĕм суйлавçăсене уншăн сасăлама чĕнчĕ. Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозри доверённăйсем—Димитрийевпа Гераçимăв йулташсем коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлама чĕнсе кĕске сăмах тухса каларĕç.

Митингра РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Калинкина тата Херсонăв йулташсем сăмах каларĕç.

П. И. Калинкина йулташ сăмахĕнчен

Йулташсем! Совет влаçĕ пуçланнăранпа, 20 çул хушшинче, пирĕн Совет Сойузĕ йалтах палламала мар улшăнса çĕнелчĕ. Чăвашсен тĕп хули—Шупашкар та питĕ нумай улшăнчĕ. Акă епĕ 1919 çулта Шупашкарта пулнăччĕ. Ун чухне Шупашкар халăхи пек марччĕ. Хулара 17 чиркӳ пулнă, кулаксемпе тĕрлĕ пуйансем туллийехчĕ. Пурнăç улшăнса çĕнелсех пырать. Хуçалăх ӳссе пынипе пĕрлех çынсем те ӳсеççĕ. Шупашкарти чиркӳсем вырăнне 7 вăтам шкул, 4 аслă шкул турĕç. Вĕсенче рабочисемпе колхозниксен ачисем вĕренеççĕ.

Шупашкар хулинче промышлĕннăç вăйлансах пырать. Савăтсем, хапрăксем тăваççĕ, халь тата Канашпа Шупашкар хушшине чукунçул хывреç.

Хуласем çеç мар, йалсем те йалтах улшăнса пыраççĕ. Тутаркас районне илер. Ĕсхалăх ĕлĕк трахом чирĕпе чирленĕ, выçлă-тутăлă пурăннă. Халĕ йалсенче колхозсем. Вĕсен клуб, шкул тата ытти кулътурлă учреждениссем пур. Хулара та йалта та ĕнтĕ лайăх тата пӳлтарулă çынсем палăраççĕ. Акă, епĕ хамах илем. Епĕ вĕренме 1927 çулта ти тытăнтăм. Мана Шупашкар хула советне суйларĕç. Халĕ тата Шупашкар хули тата Ишлейпе Тутаркас районĕнчи ĕççыннисем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртрĕç. Йепле пысăк хаваслăх тата шанчăклăх!

Есĕр мана шанса кандидата палăртнăшăн епĕ çав тери савăнатăп. Епĕ хамăн пĕтĕм вăйа, пĕлĕве хурса ĕçлеме тăрăшăп. Халăхпа ĕçлетĕп, халăхран ĕçлеме вĕренетĕп.

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ!

Херсонăв йулташ сăмахĕнчен

Мана Кăшавăшри колхозниксемпе колхозницăсем ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç. Епĕ çак пысăк тивĕçлĕхе коммунисла парти вĕрентнипе, совет влаçĕ пулăшнипе тата колхозниксен пуйан опытне вĕренсе пынипе илме пултартăм. Ман çине хунă шанчăка, Ленин—Сталин партийĕ вĕрентнĕ тăрăх, тӳррĕн ĕçленипе ответлĕп. Сире, суйлавçăсене, ман çине пысăк шаннăç хунăшăн тав тăватăп.

Сывă пултăр Сталин йулташ!

* * *

Йулашкинчен митингра пулнă суйлавçăсем суйлав кунĕ пурте Калинкинăпа Херсонăв йулташсемшĕн сасăлама пулса резолюци йышăнчĕç.

И. Сидоркин.

Мухтавлисенчен пĕри

ВĂРНАР, (хамăр корр.). Июнĕн 9-мĕшĕнче Тури Карачурари „Ленин çулĕ" колхоз членĕсен пысăк пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура Нурăс суйлав округĕнче ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат Йе. Б. Виноградăва йулташ пулчĕ.

Виноградăва йулташ пухува пынă колхозниксемпе колхозницăсене хăйĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Пухури çынсем ăна ăшă кăмăлпа кĕтсе илсе, унăн сăмахне пысăк тимлĕхпе итлерĕç.

Виноградăва йулташ сăмахĕ

Йулташсем! Есĕр Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама манăн кандидатурăна палăртса, мана пысăк хисеп турăр, ман çине пысăк шанчăк хутăр. Çак хисепшĕн сире пĕтĕм чĕрери кăмăлпа тав тăватăп.

Пирĕн совет çĕршывĕнчи хĕрарăмсем—пĕртан правалă çынсем. Вĕсем пур правасемпе те арçынсемпе пĕртан усă кураççĕ.

Октябĕрти аслă революци хыççăн тин пирĕн пек çынсем çын шутне кĕрсе ырă пурнăçпа пурăнма тытăнчĕç. 1928 çулта йалти обшчĕствăлă ĕçре тата совет органĕсен ĕçĕнче активлă ĕçлеме пуçларăм. 1930 çулта, партипе комсомол организацисемпе пĕрле, колхоз организацилерĕмĕр. Йулашки çулсенче бригадир, колхоз председателĕ, йалсовет председателĕ пулса пĕтĕм вăйа хурса ĕçлерĕм. Партипе совет органĕсем манăн ĕçе тивĕçлипе хакларĕç, мана темиçе хутчен те премилерĕç.

Мана Ленин—Сталин партийĕ, тăван çĕршыв пăхса çитĕнтерчĕç. Епĕ, ĕлĕк çын шутĕнче пулман хĕрарăм, государствăн аслă органĕн депутатне суйланмали кандидат пулма, халăх шанчăкне илме тивĕçлĕ пултăм. Çаксене пире коммуниссен партийĕ, йуратнă Сталин йулташ туса пачĕç.

Есĕр мана Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртни ман çине пысăк ответлăх хурать. Пиренĕшĕн, совет çыннисемшĕн, халăх шанчăкне илес тивĕçлĕхрен хакли урăх ним те çук. Епĕ сирĕн шанчăка ĕçре пурнăçлăп. Коммуниссен партийĕ, Сталин йулташ йертсе пынипе малашне те тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлесе, есĕр панă тивĕçпе чыса çӳле тытса пыма пулатăп.

Сывă пултăр пирĕн йуратнă çулпуç тата аслă учитĕл Сталин йулташ! (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Йулашки почтăран

Пурнăçран йулнă хаçат

„Ĕç йалавĕ" — Тутаркас райхаçачĕ.

Майăн 26-мĕшĕ Чăваш халăхĕшĕн ĕмĕр манми чаплă кун пулса иртрĕ. Чăваш халăхĕ вăл кун хаçатсем урлă хăйĕн историйĕнче пулман, илтмен чаплă, савăнăçлă хыпар—халăхăн йуратнă çулпуçĕ Сталин йулташ тата унăн çывăх соратникĕсем: Молотăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Андрейĕв, Микойан, Жданăв тата Йежов йулташсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пани çинчен пĕлчĕ. Республикăри, районри, савăтри хаçатсем ку хыпара пысăк хаваслăхпа пĕлтерме васкарĕç. Анчах пурте тесен, тĕрĕсех пулман пулĕччĕ.

Тутаркас районĕнчи „Ĕç йалавĕ" хаçат, çак чаплă хыпар республикĕпе сарăлнă хыççăн икĕ кунтан—майăн 28-мĕшĕнче тин тухать пулин те, çавара шыв сыпнă пек, вăл хыпар çинчен пĕр сăмах та шарламасть. Пурнăçран çавăн пек чăтма çук кайа йулса пыма райхаçат редакторĕн заместителне Просăва (хаçата вăл алă пусса кăларнă) кам ирĕк панă-ши?

Хаçат пурнăçран йулса пыни—вăл пĕр йенчен хаçат вулакансене хисеплемени пулать. Анчах Тутаркас райхаçат работникĕсем вулакансене хисеплесси çинчен пĕрре те шутламаççĕ иккен. Акă тепĕр тĕслĕх: Тутаркас районĕнчи парторганизацин районри пухăвĕ майăн 22-мĕшĕнче уçăлса 25-мĕшĕнче пĕтнине районра пит те лайăх пĕлеççĕ. Вăл пухура хаçата алă пусса кăларакан Просăв хăй те пулнă. Анчах çапла пулин те, Просăв майăн 28-мĕшĕнче тухнă „Ĕç йалавĕ" хаçатра: Майăн 21 — 25-мĕшĕнче районри парторганизацин отчотлă суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ", тесе пĕр именмесĕр суйать.

Ку çеç те мар... „Суйастăк суйас чун каниччен", терĕ пулас ответлă редакторăн ответсăр заместителĕ Просăв.

Çав хаçатрах вăл çырать: „Майăн 26-мĕшĕнче районри парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕ хупăннă хыççăн, парти райкомĕн пĕрремĕш заседанийĕ пулса иртрĕ", — тесе пĕлтерет. Районри пуху майăн 25-мĕшĕнче хупăннă вĕт! Райком ларăвĕ те çав кунах пулман-и?

Суйнипех çитмест. Вĕсем тата статйине те ăнланмала мар сырма тăрăшнă. Мĕнле ăнланмала-ха çакна:

„Хăйĕн программăлă сăмахĕнче Обком коммуниссене вĕрентсе пыни çинчен калама та вăхăт тупаймарĕ"...

Мĕнле ăнланмала? Чăнахах программăла сăмах-ши? йе кулса, мăшкăласа калани? Мăшкăлани çинчен, „программăла", тенĕ сăмаха кавычкăсемпе хупма, ӳркенес пулман.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Отчотпа суйлав пухăвĕн решенисем çинчен маннă

Шупашкарти кирпĕч савăчĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацин отчотпа суйлав-пухăвĕ пулнăранпа икĕ уйăх иртрĕ. Отчотпа суйлав пухăвĕ рабочисем хушшинче политикăла-массăллă ĕçе вăйлатас, парти ĕçне лайăхлатас, производствăна йертсе пырассине вăйлатас тĕлĕшпе конкретлă решенисем йышăннă.

Отчотпа суйлав пухăвĕн решенисене парторганизаци йепле пурнăçлат-ха? Калас пулат, начар. Чылай решенисем çинчен парторг пуçĕпех маннă.

Савăтри питĕ пысăк çитменлĕх—рабочисем çитменни. Май уйăхĕнче 80 çын тухса кайнă. Рабочисем хушшинче политикăлă-массăла ĕçе организацилемен. Ийуҥ уйăхĕшĕн Чăваш республикинчи хаçатсене çырăнса илме „манса" кайнă.

Хаљ савăта çĕнĕрен 75 рабочи килнĕ. Вĕсем хушшинче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентме виçĕ коммуниса: Андрейĕв А., Йегорăв, Старшов йулташсене çирĕплетнĕ. Парторг Александрăв çак йулташсене çирĕплетнипе лăпланнă.

Суйлавçăсем хушшинче ĕçлеме лайăх план тунă. Планра лекцисем, докладсем итлесси çинчен т. ыт. çинчен те каланă. Анчах плана пурнăçлама тытăнмах-ха.

Суйлавçăсем хушшинче ĕçлеме 9 агитатăр уйăрнă. Вĕсене парторг çителĕклĕ йертсе пымасť.

Парти ретне ўстерессипирки калаçусемсĕр пуçне ним те туман. Парторганизацинче икĕ кандидат. Йегорăв йулташ 1932 çултанпа кандидатра тăрат. Вĕсене парторганизаци парти членне куçма пулăшмасť. Савăтра 26 стаханăвĕц, кашни кун вĕсем нормăна 160—200 процент тултараççĕ. Вĕсем хушшинче те ĕçлеме шухăшланисĕр пўçне нимĕн туни те çук.

Парторганизаци комсомол организацине йертсе пырас пирки хăйĕн решенисене пурнăçламасť. Комсорг Усăвă йулташ 4 уйăха пропагандиссен курсне кайнă, ун вырăнне никама та замеçтителе хăварман. Çапла вара ку таранччен те комсомол пуçламĕш организацийĕ комсоргсăрах ларат.

ПСÇКЛС Шупашкар хула комитечĕ те кирпĕч савăтĕнчи комсомолĕцсемпе интересленмест, султалăкра пĕр инструктăр та пырса курман.

Кăçалхи çул савăтăн 10 мĕлйун штук кирпĕч туса кăлармала. Çак плана пурнăçлас тесен, савăтăн кунне 96 пин штук кирпĕч туса кăлармала, паянхи куна пурĕ те 50—60 пин штук анчах туса кăлараççĕ.

Пуçламĕш парторганизацисем отчотпа суйлав пухăвĕсем йышăннă решенисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăрасси ПСК(б)П хула комитет ĕçĕнче тĕп вырăнта тăмала.

А. Михайлăв.

Чăрсăр приказ

КАРШЛАХ, Тутаркас районĕ (хамăр корр.). Каршлăхри ачасен санаторинчи çитменлĕхсем çинчен хаçатсенче час-часах çыраççĕ. Санатори ĕçĕнчи тĕп çитменлĕх—ачасен сывлăхне тĕреклетес тĕлĕшпе ĕçлекен врач-специалис, медицинă сестрисем çукки. Çак работниксене, паллах, Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн тумала. Тата санаторире ĕçлеме технически работниксене те тупса çитермен,—ку ĕнтĕ санатори директăрĕ тумали ĕç. Санаторинче ĕç сыхлавне йĕркелемен, ĕçлекенсем хушшинче политикăлă воспитани ĕçне организацилемен, — куншăн медицинă работникĕсен профсойузĕн облăç комитечĕ ответлă.

Санатори ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме тĕсе пулмала, Каршлăха ЧАССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ Чернов йулташ тата медицинă работникĕсен профсойузĕн облăç комитечĕн председателĕ Çтепанăв йулташ пынă. Вĕсем, хăйсем çине çавăрăнса пăхма маннине,—кам-ха кунта çитменлĕхсемшĕн чи айăпли?—тесе шухăшланă пулас. „Чи айăпли" бухгалтĕр Мочалов пулнă иккен... Чернов й. ийунĕн 3-че кăларнă приказ тăрăх „ĕç дисциплинине çирĕплетменшĕн, санатори ĕçĕсене аванлатманшăн" санатори бухгалтĕрне Мочалова ĕçрен кăларнă. Пĕрене вырăнне улăм пĕрчине йарса илнĕ! Мочалов йулташа ĕçрен кăларма унтан-кунтан пухнă „сăлтавсем" те кулăшласкерсем. „При нашем присутствии бухгалтер санатория тов. Мочалов всячески стремился дискредитировать в лице нас(?!) директора санатория... оскорбил ее(?) говоря..." (Чернов йулташ приказĕнчен). Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ Чернов йулташ умĕнче унăн директăрĕсем çинчен сăмах хушма йурамасť мĕн!

Мочалов йулташ хаљхи вăхăтра санаторинчи суйлав участкин суйлав комиççи çекретарĕ. Çав вăхăтрах Чернов йулташ ăна талăк хушшинче ĕçсене парса, санаторинчен „тасалма хушнă".

Мĕнле чăрсăрлăх ку? Республикăри тивĕçлĕ оргăнсем çак ĕçпе халех интересленессе шанса тăратпăр.

Ф. Александрăв.

Сĕнĕ столовăй пулат

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Район центрĕнче ку таранчен пĕр пĕчĕк столовăй çеç пулнă. Çавăнпа та вăл столовăй халăха çырлахтарма пултарайман. Хаљ кунта çĕнĕрен пысăк столовăй туса çитереççĕ.

Й. Самарин.

750 тенкĕ выљăса илчĕ

ШĂХАСАН. Йамаш аласталăх ертелĕнче ĕçлекен И. А. Дроздăв й. Иккĕмĕш пилĕкçуллăх займĕпе (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) 750 тенкĕ выљăса илчĕ.

Дроздăв й. ССР Сойузĕн Оборонине Тĕреклетмели займа 275 тенкĕлĕх çыраннă.

А. Иванов.

АТĂЛ ÇИНЧЕ

Хĕрлĕ Çар командирĕсемпе арăмĕсем отпуск вăхăтĕнче пăрахут çинче çўреççĕ.

(Сойузфото).

Германи Чехословакине вăрçăпа тапăнма хатĕрленесси вăйланат

Ийунĕн 12-мĕшĕ—Чехословакире муниципалитет (вырăнти тытăм оргăнĕсем) суйлавĕсен виççĕмĕш турĕ пулмали кун. Фашисла Германи Чехословакине хирĕç вăрçăпа çапăçма хатĕрленессине вăйлатат. Австрипе Чехословаки хушшинчи чикĕ тăршĕпех, пуринчен ытла Дунай тайлăмĕнче тата Братиславă сывăхĕнче Германи фашисĕсем вăрçă йенĕпе каçса кайсах укрепленисем тăваççĕ.

Чехословаки чикки сывăхĕнчи районсенче Германи çарĕсен пур гарнизонĕсенче те салтаксемпе офицерсене отпусксем пама чарнă. Германи çарĕн ретне запасра тăракансене—26 çултан пуçласа 30 çулхи таран илнĕ.

Чехословаки çывăхĕнче вăрçа хатĕрленнипе пĕрлех, çав ĕç Германин ытти пайĕсенче те вăйлăн пулса пырат. Вандсбеке хулинче пысăк çар лазаречĕ туса лартнă. Ытти чылай вырăнсенче те çар казармисем нумай тунă.

Фашиссен влаçĕсем пур хресчен хуçалăхĕсене те çакăн пек распорйажени панă: вĕсен обйазатељнă йĕркепех мĕн пур выљăх апачĕсенчен 50 процентне çара çимĕçсем тата ытти хатĕрĕсем тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен тытăмĕсене сутмала.

Ийуҥ уйăхĕнче Германире фашисла парти членĕсене çар ĕçне вĕрентме пухаççĕ.

Фашиссен пўтсĕр провокацине ответлесе пĕтĕм Чехословаки тăрăх республикăна сыхлас тĕлĕшпе массăлă демонстрацисем пулса иртеççĕ. Ийунĕн 9-мĕшĕнче Моравири виçĕ пысăк хулара Чехословаки халăхĕ хăйĕн çарĕпе пĕр шухăшлăн пулнине кăтартакан хăватлă демонстрацисем пулса иртнĕ.

Республикăна хўтлес ĕçе йамали фонда укçа-тенкĕ пухасси пысăк ăнăçлăхпа иртсе пырат. Сăмахран, Брно хулинче республикăна хўтлес ĕçе йамали фонда виçĕ мĕлйун крон пухнă.

(ТАСС).

Республикăлă Испанипе пĕр шухăшлисен митингĕ

Ийунĕн 10-мĕшĕнче Ҥйу-Йоркри митинга пухăнна 20 пин ытла çын республикăлă Испанийе хĕçпăшалсем илсе кайма чарнине пăрахăçа кăларма ыйтнă. Митингра Испани республикĕ валљи 20 пин доллăр укçа пухнă.

(ТАСС).

Китай авиацийĕн çитĕнĕвĕ

Ийунĕн 10-мĕшĕнче Китай самољочĕсем Уху хулинчен çўлерех (Вăтам Китай), Йанцзы йуханшывĕ çинче, Йапонин çар карапĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Датун (Ухуран кăнтăр—хĕвелтухăçнерех) сывăхĕнче Китай самољочĕсем 30 ытла йăвăр бомбăсем пăрахнă. Йапонин икĕ çар карапне путарнă. Китай самољочĕсем хăйсен базине ăнăçлă таврăннă. (ТАСС).

Кĕскен

Йунтапари „Алмаз" колхоз членĕсем (Елĕк р.) çак кунсенче Шупашкарпа Вăрнар хушшинчи шоççе çулĕ çине хăйăр сарма пуçларĕç.

Ку ĕçре В. Федăрăв, Л. Михайлăв, П. Никифăрăв йулташсем нормăна 200 процент тултăрса пыраççĕ,

Пирĕн çулйĕр бригади Анаткасри бригадăпа ăмăртса ĕçлет.

Г. Никифăрăв.

Маťшўри „Çамрăк колхозник" (Шăхасан р.) çулйĕр ĕçĕнче ĕçлеме 15 çынтан бригадă организацилерĕ. Анчах çулйĕр бригади ĕçе тытăнман-ха.

Колхозăн пурĕ 60 кубла метр чул, 130 кубла метр хăйăр кăларса турттармала пулсан, паянхи куна нимĕн те туман. Колхоз çак ĕç хăй тĕллĕн пуласса шанаť пулмала.

Ник. Йакăвлĕв.

Вăрмар районĕнчи Аслă Чакри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозăн 1938 çулта 250 пин штук кирпĕч, 80 пин штук черепицă туса кăлармала. Çак плана колхозниксем пысăк хаваслăха йышăнчĕç. Колхозăн черепицă тăвакан бригади черепицă тăвас ĕçе пуçăнчĕ.

Колхозниксем кирпĕчпе черепицă тăвас плана ийунĕн 26-мĕшĕччен 30 процент пурнăçлама пулаççĕ.

В. Андрийанăв.

ССР Сойузĕн Оборонине Тĕреклетмели Государствăн шалти займĕ

Проигрышсăр кăларăм

Выљавсен пĕрремĕш тиражĕн справкăлă таблици

ССР Сойузĕн Обронине Тĕреклетмели займ выљавĕсен пĕрремĕш тиражĕнче займăн проигрышсăр кăларăмĕнчи мĕн пур 53 разрйадра çакăн пек çерисемпе облигацисен номĕрĕсем çине выљавсем тухнă (выљав суммине облигаци хакне те кĕртеççĕ):

Çерисен №№	Облигацисен №№	Выљавсен пысăкăшĕ тенкĕпе	Çерисен №№	Облигацисен №№	Выљавсен пысăкăшĕ тенкĕпе
20184	07*)	500	29346	1—50	200
20262	02*)	500	29358	44*)	500
20350	1—50	150	29726	43*)	500
20438	32*)	500	29911	1—50	150
20512	27*)	500	29943	14*)	1000
21035	1—50	150	30028	47*)	500
21094	30*)	500	30090	1—50	150
21116	38*)	1000	30997	39*)	500
21240	1—50	150	31531	15*)	500
21350	39*)	500	31605	04*)	3000
21635	1—50	150	32049	38*)	500
21813	47*)	500	32072	05*)	1000
21851	1—50	150	32080	1—50	200
22424	1—50	200	32451	48*)	500
22647	38*)	500	32789	23*)	500
22725	38*)	500	32915	50*)	500
22761	30*)	500	33384	1—50	200
23172	27*)	500	33598	1—50	200
23611	1—50	200	33680	1—50	200
23808	1—50	150	34106	1—50	150
24233	42*)	500	34282	09*)	1000
24305	24*)	500	34528	1—50	200
24444	34*)	1000	34918	1—50	200
24556	06*)	500	35030	1—50	150
24717	17*)	500	35040	1—50	150
24997	1—50	200	35211	1—50	150
25003	27*)	500	35409	45*)	500
25150	1—50	200	35590	40*)	500
25243	41*)	500	35786	38*)	500
25433	09*)	500	35956	1—50	150
25783	46*)	500	35973	07*)	500
25807	1—50	150	36379	25*)	500
25841	1—50	150	36906	04*)	500
25947	1—50	200	37271	1—50	150
26104	1—50	150	37397	1—50	150
26230	1—50	200	37634	1—50	150
26834	03*)	500	37894	1—50	200
26854	1—50	200	38179	1—50	200
27286	36*)	500	38225	33*)	500
27668	1—50	150	38511	1—50	150
27890	1—50	150	38715	50*)	500
28024	47*)	500	38796	03*)	500
28389	19*)	500	39038	43*)	500
28501	46*)	500	39078	1—50	150
28561	28*)	500	39183	1—50	150
28613	1—50	200	39248	40*)	500
28720	28*)	500	39289	44*)	500
28835	13*)	500	39302	04*)	500
29116	45*)	500	39679	1—50	200
29128	1—50	150	39836	1—50	150

*) Çак çеринчи облигацисен ытти 49 номĕрĕсем кашнийех 150-шер тенкĕ выљăса илнĕ.

Ф. С. Çтепанăв йулташа Чăваш АССР Йустици Халăх Комиссарне лартасси çинчен

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ çапла йышăнат: Филипп Çтепанăвич Çтепанăв йулташа Чăваш АССР Йустици Халăх Комиссарне лартас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ З. АНДРЕЙЕВĂ.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет çекретарĕ Т. ВАСИЛИЕВ.

Шупашкар хули, ийунĕн 2-мĕш 1938 çул.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн замеçтителĕ çинчен

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ çапла йышăнат:

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн замеçтителĕ ĕççене туса пыма Андрей Михайлович Краснов йулташ çине хурас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ З. АНДРЕЙЕВĂ.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет çекретарĕ Т. ВАСИЛИЕВ.

Шупашкар хули, ийунĕн 2-мĕш 1938 çул.

Кирпĕч çапма пуçăнчĕç

Нĕркесри (Патăрйел районĕ) Шмидт йачĕпе тăракан промысла колхозĕ кирпĕч çапма пуçăнчĕ.

Колхозăн кăçалхи çул план тăрăх 700 пин кирпĕч çапмала.

В. Герасимăв.

Ответлă редактăр замеçтителĕ И. П. ПАВЛАВ—ПИНЕР

Пайан кинотеатрта	саслă, çĕнĕ кино-фильм „год 19 ый"

Автомобил тата мотоциклет техникине

ВĔРЕНĔР!

Физкультура Комитечĕн автомото ĕçне вĕрентекен пункчĕ спорт организацисемпе тата ытти организацисемпе, уйрăм çынсемпе те автомобиљ çинче çўреме вĕренме (120 сехет) тата мотоцикл çинче çўреме вĕренме (96 сехет) догăвăрсем тăват. Вĕренме производствăран уйăрăлмасăр çўремеле.

Вĕренсе тухнă хыççăн шофер-любитěл правине параççĕ.

Авто-мото ĕçне вĕрентекен пункт адресĕ: ул. Карла-Либкнехта д. №14. тел. № 7—52.

Çĕрпўри фељдшĕрсен шкулне

ПРЕПОДАВАТЕЛСЕМ КИРЛĔ:

Хими, биологи тата латин чĕлхи тăрăх.

Физикăпа математикă тăрăх.

Физкуљтурăпа çар ĕçне вĕрентекен инструктăр,

Ĕçукçи килĕшў тăрăх,

ДИРЕКЦИ.

2—2

ЧĂВАШ АССР ÇĔРĔÇ ХАЛĂХ КОМИССАРИАТНЕ

Аслă бухгалтĕр

Економист-финансист

Бухгалтĕр помошникĕ

КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшў тăрăх.

Госстрахăн Йетĕрнери Инспекцийĕ çак документсене çухатнă, вĕсене пăрахăçа тухнă тесе шутламала:

Пурлăха ирĕклĕн страхланă тăрăх çери „Б" 926351—926375

Пурнăçа окладран иртерсе страхлана тăрăх „ „А" 391776—391800

„ „ „ „ „ „Ж" 304179—304200

Уйрăмăн „ „ „ „А" 5276—5300

Госзнак 026208 №-тен пуçласа 026225 № таран.

ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн

КАНАШРИ

йалхуçалăхне механизацилеме вĕрентекен шкулĕ

МЕХАНИКСЕН, ТРАКТĂР ОТРЙАЧĔСЕН БРИГАДИРĔСЕН ТАТА КОМБАЙНЕРСЕН УЙРĂМĔСЕНЕ

ВĔРЕНМЕ ИЛЕССИ СИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ

Веренмели срук

Трактăр отрйачĕсен бригадирĕсен уйрăмĕнче . . . . 8 уйăх

Комбайнерсен уйрăмĕнче . . . . 6 „

Механиксен уйрăмĕнче . . . . 18 „

Зайавленисене трактăриссемпе трактăр отрйачĕсен бригадирĕсенчен çеç йышăнаççĕ.

Вĕреннĕшĕн укçа илмеççĕ

Вĕренекенсене общежити тата уйăхне 110 тенкĕрен 120 тенкĕ таран çтипенди параççĕ.

Йалхуçалăхне механизацилеме вĕрентекен шкула зайавленисене çак адрĕспе йамала: гор. Канаш, Чувашской АССР, Канашская школа механизации с-х.

Зайавленисене 1938 çулхи çенťабĕрĕн 1-мĕшчен йышăнаççĕ. Зайавленисемпе пĕрле Машинă-Трактăрлă Станцинче мĕн ĕçлени, миçе çул ĕçлени, кĕске автобиографи, сывлăх мĕнли, миçе çул вĕренни çинчен справкăсем тăратмала.

Трактăр отрйачĕсен бригадирĕсемпе комбайнерсен уйрăмне вĕренме кĕрекенсене пуçламĕш шкулта 4 çул вĕреннĕ чухлĕ вырăс чĕлхипе математикă тата трактăр çинчен, трактăриссен курсĕнчен вĕренсе тухни таран пĕлнине испытани ыйтаççĕ.

Механиксен уйрăмне вĕренме кĕрекенсене 5-мĕш класра вĕренни таран, трактăр çинчен, трактăр отрйачĕсен бригадирĕсен курсĕнчен вĕренсе тухни таран пĕлнине ыйтаççĕ.

Вĕренме илме тĕрĕслў испытани çенťабĕрĕн 10-25-мĕш кунĕсем хушшинче пулса иртет.

ДИРЕКЦИ.

Чăпта промысла сойузĕ çинчен

Чăпта çапакан промысла ертелсем çĕрĕçне тăвакан йалхуçалăх ертелĕсем пекех ирĕклĕ организацисем пулса тăраççĕ. Чăваш республикĕнче чăпта çапакан промысла ертелĕсене Чăваш чăпта промсойуз 51 ертелпе 1 промколхоза пĕрлештерсе тăрат.

Иртнĕ вăхăтра халăх тăшманĕсем Чăпта промсойуз ĕçне ишĕлтерсе пынă. Çавăнпа та хаљхи вăхăтра сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессине—чи çивĕч ыйту пулса тăрат. Анчах сойуз работникĕсем ку ĕçе çителĕклĕ туса пыраççĕ теме çук-ха. Учот ĕçĕ паянхи кунччченех йапăх пулса пырат, кооператив пурлăхне çаратас çĕрĕк йăла халĕ те пур-ха. Пĕрремĕш кварťалта Шайкилтĕ ертелĕнче 19,1 пин тенкĕ, Очкасси (Ишлей р.) ертелĕнче 9,5 пин тенкĕ растрата тунă. Кун пек примерсене тата нумай илсе кăтартма пулаť. Работниксене ĕç укçи тўлесси те калама çук йапăх. Пĕрремĕш кварťалта 153,4 пин тенкĕ ĕç укçи тўлемесĕр хăварнă.

Капиталлă строитĕлствă планĕ тăрăх та çакна йевĕр картинăсемех курма пулаť. Кăçалхи строитĕлствă планне пĕрремĕш кварťалра 14,4 процент кăна тултарнă. Сĕктерти савăтăн хăма çуракан цехне, вырăнсĕнчи клубсемпе тата ытти куљтурлă çўрчĕсене тăвас ĕç сўрĕккĕн пулса пыраť. Нумай ертелсем хăйсен производствă программине тултараймаççĕ тата укçа-тенкĕне планпа пăхнинчен ытлашши тăкаклаççĕ.

Сойуз тăрăх 1938 çулхи пĕрремĕш кварťалти производствă планне 73,1 процент, тăватă уйăх планне 74,7 процент кăна тултарнă. Туса кăларакан уйрăм продукцисем тăрăх илсен те, производствă планĕ туллин пурнăçа кĕрсе пымасť. Çăпата тăвасси, сĕтел-пукансем çыхасси тата илемлетнĕ йапаласем тăвасси йулса пыраť. Корзинкă çыхас ĕçпе çеç план тулса пыраť.

Лайăх ĕçлекен ертелсен йышĕсем питĕ сахал, йапăх ĕçлекенсен хисепĕ йышлă. Çĕнйал Шетмĕ т. ыт. ертелсем чăтма çук начар ĕçлесе пыраççĕ.

Чи малтанах—чăпта промсойуз аппаратĕ йапăх ĕçлесе пынине палăртмала. Аппарат ĕçе тўрлетес йенĕпе нимĕн те туман. ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă вăхăтри куљтмассăлă-политикла ĕçсен пуйан опычĕпе усă курман, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленнĕ май, производствăри çĕкленĕве организацилемен.

Иккĕмĕшĕнчен—вырăнсенчи промкооперативсен руководителĕсем производствă ĕçне начар организацилеççĕ, начар йертсе пыраççĕ. Нумай промкооперативсен председателĕсем 1937 çулта пулнă çитменлĕхсене шута илсе, вĕсенчен политикăла тата производствăла вывăдсем туман, пулнă йăнăшсене хăвăртрах тўрлетессишĕн бољшевикла кĕрешмен. Кивçурт Марка, Анаткас ертелĕсем хăйсен ĕç планĕсене уйрăм бригадăсем, членсем патне вăхăтра çитереймен.

Туса кăларнă продукцисен пахалăхĕпе те мухтанмали çук. Пĕрремĕш кварťалра хатĕрленĕ чăптасен иккĕмĕшпе виççĕмĕш сурчĕсем чĕреке йахăн йышăнаççĕ. Хăшпĕр ертелсенче (Тивĕш) пĕрремĕш суртран йапăх продукцисем 50—60 процента çитеççĕ. Продукцисен пахалăхĕ йапăххи—производствăна панă материалсем начарринчен, ĕçе начар организацилениинчен килнĕ.

Продукцисен хăйне тăракан хакне чакарас ĕç те йапăх. Таварсен хакĕсем ўссе пыраççĕ. Чăпта хакĕ пĕлтĕрхипе танлаштарсан икĕ процент ытла ўснĕ.

Çавăн пекех продукцисене вырнаçтарас ĕç те çителĕксĕр. Апрелчен туса кăларнă чăптасем 629,4 пин тенкĕлĕх, корзинкăсем—115,9 пин тенкĕлĕх, пурĕ 725,4 пин тенкĕлĕх продукци ертелсен склачĕсенче сутăнмасăр выртаť.

Асăннă çитменлĕхсемпе пĕрлех ĕç вăйĕ чакнине те палăртса хăвармала. Иртĕ çулхи пĕрремĕш кварťалра 11031 ĕçлекен пулнă пулсан, кăçалхи çул çак вăхăта 7937 çын çеç (72 процент) йулнă. Кăтартнă цифăрсем ертелсенчи ĕç вăйĕ йухăнса тăни çинчен аванах каласа параççĕ.

Чăпта промсойуз куљтмассăлă ĕçе мĕнле пурнăçласа пынине илсе пăхар. 1938 çулта планпа палăртнă 3 клубран пĕр клубне çеç тунă, иккĕшĕ хут çинчех йулнă. Сиçĕ вулав çурчĕ, 12 хĕрлĕ кĕтес тума палăртнă пулсан, халĕ те вĕсене тăвас ĕçе тытăнман-ха.

План тăрăх куљтработниксен, хор тата драмкружок руководителĕсен, çтена хаçат редактăрĕсен канашлăвне 1-мĕш чĕрĕкре иртерме палăртнă пулнă. Анчах сойуз кун çинчен пачах манса кайнă.

Ертел членĕсем хушшинчи хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕç те калама çук начар пыраť. Хаљхи вăхăтра 382 хутла пĕлменнисенчен 60 çын, 998 хутла сахал пĕлекеннисенчен 84 çын çеç хутла вĕренеççĕ. Анчах вĕсене вĕрентесси те йĕркелĕ пыраť тесе калама хĕн.

Чăпта промсойуз çиçтеминче стаханăвла йухăм чылайах саралнă. Чи лайăх ĕçлесе пынă Мăналти аласта ертелĕ республикăри куçса çўрекен хĕрлĕ йалава илнĕ. Çак çулхи майăн 1-мĕш тĕлне пурĕ 614 стаханăвĕц палăрнă. Вĕсене сойуз 13.769 тенкĕ укçа парса премиленĕ. Çак вăхăтрах 25 стаханăвĕца йертсе пыракан ĕçе куçарнă. Вĕсем хаљхи вăхăтра хăйсен ĕçне аван туса пыраççĕ.

Чаканар ертелĕнчи Наумăв, Чурачăкри Алмазăв стаханăвĕцсем ĕç тухăçлăхĕпе тата продукци пахалăхĕпе Чăваш республикĕнчи пур аластаççемшĕн те пример пулса тăраççĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Çапах та чăпта промсойуз халлĕхе уйрăм ертелсенче стаханăвла йухăма кирлĕ пек сарса йарайманха. Ертелпе ертел, членсемпе членсем хушшинче социалисăмла ăмăрту догăвăрĕсем туса çитермен, стаханăвĕцсене пухса пĕр-пĕрин ĕç опычĕсемпе сахал паллаштарнă.

Çўлте асăннă çитменлĕхсем малашнехи ĕçре пулмала мар.

Т. Иванов.

Уполномоченный Чувашглавлита № 291

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтрест. Закӑз № 500.